ХЫПАР

1999 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

4 (904) №, 2017, нарăс/февраль, 2 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/нарăсăн 1-мĕшĕ тĕлне/

| | |
|---|---|
| **ПАХЧАÇИМĔÇ** | |
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕрулми | 17-20 |
| Купăста | 14-16 |
| Пекин купăсти | 85 |
| Сухан | 20-25 |
| Кишĕр | 20-25 |
| Ыхра | 200-300 |
| Хăяр | 60-120 |
| Хĕрлĕ кăшман | 25 |
| Помидор | 60-150 |
| Пылак пăрăç | 80-150 |
| Кавăн | 30 |
| Тăварланă хăяр | 100-120 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 100 |
| **УЛМА-ÇЫРЛА** | |
| Панулми | 40-120 |
| Исĕм çырли | 55-130 |
| Апельсин | 65-100 |
| Лимон | 150-200 |
| Банан | 50-70 |
| Мандарин | 55-100 |
| Груша | 75-100 |
| Хурма | 40-90 |
| Кĕтмел çырли | 200 |
| Шур çырли | 180 |
| Сырлан | 200 |
| Палан | 50 |
| Шăлан /типĕтни/ | 300 |
| **ÇĂНĂХ-КĔРПЕ** | |
| Тулă çăнăхĕ | 25 |
| Вир кĕрпи | 29 |
| Хуратул -»- | 69-86 |
| Тулă -»- | 34 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 48-55 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 40 |
| Пыл | 400-450 |
| **АШ-КАКАЙ** | |
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 200-320 |
| Сурăх ашĕ | 180-320 |
| Пĕвер | 160-200 |
| Салă | 80-150 |
| Кăркка | 400 |
| Кролик | 350 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 52-68 |
| **ПУЛĂ** | |
| Шăнтнă скумбри | 200-270 |
| -»- сельдь | 200 |
| Мойва | 200 |
| Минтай | 140-170 |
| Треска | 260 |
| Шăла пулă /судак/ | 170-300 |
| Çупах /лещ/ | 100 |
| Карп | 250 |
| Çуйăн /сом/ | 250 |
| **СĔТ-ТУРĂХ** | |
| Сĕт /литр/ | 35-40 |
| Хăйма | 100-120 |
| Тăпăрч | 210-220 |
| Сыр | 350 |
| Услам çу | 250-300 |



## Пӳлĕмри чечексене тымарлантаратпăр

**Нарăс уйăхĕ çитрĕ. Кун вăрăмланма тытăнни палăрть. Пӳлĕмре ӳсекен чечек-курăк тĕнчи те вăранма пуçлать. Хăшĕ-пĕри папкаланма, çулçă кăларма тытăнать. Шăпах пӳлĕмри ӳсен-тăрана тымарлантарса ĕрчетмелли вăхăт вăл.** Чечексене ĕрчетесси пӳлĕмри ӳсен-тăрана пăхас ĕçре чи кăсăкли. Туратран тымарлантарса ĕрчетнĕ çамрăк хунава тус-юлташпа ылмаштарма, килте çук çĕнĕ, сайра тĕл пулакан экземплярлă пулма май парать. Паллах, тымарлантарас ĕç йĕркине пĕлсессĕн чечек-курăка ĕрчетме çăмăлрах. Хăшпĕр курăк турачĕ 4-5 уйăх тымар ямасăр ларма пултарать.

Татса илнĕ турата шыва лартса тымарлантарни чылай чухне тĕл пулать. Анчах çакă тĕрĕсех мар. Шывра тухнă тымар /уйрăмах вăрăмланса кайсан/ тăпрана куçарса лартсассăн вăй илсе каяймасть, аталанаймасăр вăрах ларать. Туратăн çĕнĕрен тăпрана тымар яма тивет. Шыва лартсассăн кăштах тымарлансассăнах тăпрана куçармалла.

Чылай ӳсен-тăран лайăх тымарланать. Хăшĕ-пĕри çулçăран та çĕнĕ хунав яма пултарать /сансевьера, фиалка/. Хăшне тымарланмашкăн пĕр çулçăпа пĕрле кăштах турат кирлех /бегони, рекс, замиокулькас, алое, крассула т.ыт./. Хăшпĕр ӳсен-тăрана тымар яма турат çинче пĕр-икĕ папка пулмалла /фикус, гибискус, цитрус, мирт йышĕнчисем т. ыт./.

Турата е çулçăна сывă, çирĕп ӳсен-тăранран илмелле. Аманнă, имшерленнĕ тĕмрен илнĕ турат хăвăртах аталанаймĕ. Ют çĕртен кӳрсе килнĕ чечек-курăк туратне те тымарлантарма йывăртарах. Мĕншĕн тесен вĕсене сутма хатĕрлесе вăйлă чечеклентерекен ятарлă им-çампа шăварса тăнă. Çавна май мĕнпур вăйĕ чечекленме кайнă, тымарĕ вара – вăйсăр. Туяннă куршакри чечексене çур çул иртсен çеç ĕрчетме пайлама юрать.

Ĕрчетмешкĕн пĕр çул çитĕннĕ туратсене касмалла. Ытлашши çамрăкки те, ватти те йывăртараххăн вăй илĕ.

Тымарлантарма лартакан тăпра органикăпа пуянах пулмалла мар. Ытлашши кăпка, пулăхлă тăпрара вăл тымарланса каяймасть, çĕрме те пултарать. Вăтамран çак виçепе хатĕрлеме юрать: çерем тăпри, торф – 50%, хăйăрпа вăрман мăкĕ /типĕтни/ – 50%. Сфагнум мăкне тăпрана кăпкалатма, нӳрĕк тытма, тăпрана çыхăнтарма хушаççĕ. Мăк хушнă тăпра çамрăк чечеке куçарса лартнă чухне саланса каймасть.

Лартмалли субстрата стерилизацилесе илмелле. Тĕрлĕ меслет пур. Кĕске хумлă духовкăра /микроволновка/ е ахаль духовкăра. Пĕр тĕслĕх илсе кăтартăпăр. Кастрюль тĕпне чӳхесе илнĕ хăйăр 3-4 см, ун çине – торф, çиеле – мăк, ытти хутăш. Хăйăр çеç йĕпенмелĕх шыв ямалла. 10 литрлă кастрюле хупăлчапа витсе вăтам çулăм çинче 40 минут тытмалла. Унтан ăна сивĕтмелле, йăлтах хутăштармалла. Витĕр курăнакан пластик савăтсене тултармалла /сывлăш выляма шкăн вĕсен аякне, тĕпне шăтармалла/. Витĕр курăнни ӳсен-тăран тымарланнине сăнаса тăма май парать. Пĕчĕк, çулçăран каяканни валли 100 г стаканчик, пысăкрах туна валли 200 г кĕрекен стаканчиксем çителĕклĕ.

Туна хатĕрлесси. Ăна чалăшла касмалла, пăчăртанса тухакан сĕткенне çуса ямалла. Лартмалли енне 2-3 сехет «Корневина» чиксе тытмалла, унтан – тăпрана. Турат унта çирĕп тăмалла. Лайăх аталантăр тесен панчаламалла: хунава полиэтиленпа хупламалла.

## "Кулакан" шаршан



Паянхи пурнăçра чылай чухне газпа усă куратпăр пулин те вутă ялта пурпĕрех кирлĕ. Типĕ, шăтăртатса çунакан вутпа мунча хутсассăн йĕри-тавра мунча шăрши сарăлать, унтан пахи мĕн пултăр? Çавăнпах çулсеренех вутă хатĕрлеççĕ те.

Татса çурнă хыççăн вутта шаршанра, çумăр лекмен çĕрте типĕтмелле. Сарайĕнче вырăн пулсан лайăх-ха, анчах унта вырăн пулсан лайăх-ха, анчах унта выльăх-чĕрлĕх валли лаптăк кирлĕ. Вут шаршанне çуртпа юнашар купалама пулать. Кун пек чухне хуралтă тăррине кăштах кăлармалла. Шаршана тĕрлĕ ӳкерчĕклесе хăпартма пулать. Икĕ кубла метр вутăран тĕрлĕ ӳкерчĕк калăплама пулать. Ӳнерçĕ куçĕ çеç кирлĕ.

Час-часах вутта çавракалатса шаршанлаççĕ. Темиçе вут сыппине шаршана сăн кĕртмелле меллештерсе хуратăн та вутă шаршанĕ йăл кулăпа çиçме пуçлĕ. Кирек камăн та чунра хавас туйăм вăранĕ.

## Ванна пӳлĕмĕ йĕркелер-и?

**Ялсенчи çуртсенче халĕ шыв кĕртеççĕ, ванна, туалет пӳлĕмĕсем хăтлаççĕ. Ăçтарах тата мĕнлерех йĕркелемелле-ха çав пӳлĕмсене?**

Чи кирли çак «нӳрĕк» пӳлĕмсене вентиляципе лайăх тивĕçтермелле. Вĕсене çын пурăнман пӳлĕмсем çийĕнче /икĕ хутлă пулсан/ вырнаçтарма тăрăшмалла. Хула çурчĕсенче ванна, туалет пӳлĕмĕсем чӳречесĕр. Ялта ванна пӳлĕмне пĕчĕкрех чӳрече касни пăсăк пулмĕ. Пĕрре вăл усăлтарса тăма май парать, тепре – çутă, электроэнерги перекетлесси те шутра пулмалла.

Çак пӳлĕмсене пӳртĕн кай еннелле вырнаçтармалла. Лаптăка пӳрт калăпăшне кура уйăрмалла. СНиП йĕрки тăрăх çуртри туалет лаптăкĕ анлăшпе 0,8 метртан, вăрăмăшĕ 1,2 метртан пĕчĕкрех пулмалла мар.

Ванна, туалет пӳлĕмĕсен алăкĕсем ирĕккелле усăлмалла, шалалла мар. Çак пӳлĕмсене кĕмелли алăксем тӳрех кухньăна е пурăнмалли пӳлĕме тухмалла мар.

Туалет, ванна приборĕсем çирĕп, хулăн стена çумĕнче тытăнса тăмалла, икĕ пӳлĕме уйăракан çӳхе стена çумне çирĕплетме юрамасть.

Уйрăм çуртра çак пӳлĕмсене тăвас тесен унта мĕн-мĕн вырнаçтарассине шута илмелле. Час-часах çакнашкал пӳлĕмре ваннăна та, душ кабинине те вырнаçтарççĕ. Япала çумалли машина, типĕтмелли прибор, хуçалăхра усă куракан хими япалисем, алшăлли çакмалли т. ыт. те. Çакна йăлтах маларах шута илмелле. Ваннăпа душ кабини хушшинче 0,7 м, унитазпа алăк хушшинче 0,6 метртан кая мар пулмалла.

Ванна пӳлĕмĕ – нӳрĕк вырăн. Çавăнпа ăна хăтламашкăн нӳрĕке чăтăмлă материал суйламалла. Чылайăшĕ керамика плитипе усă курать. Вĕсем тĕрлĕрен пӳлĕме илемлĕх кĕртмелĕх суйламалăх пур. Плитка вăрах тăрать, ăна тирпейлеме те çăмăлрах.

Пластик панельсем йĕнĕрех. Вĕсене туянакан та нумай. Пластика килĕшнĕ пек майлаштарма çăмăл. Ăна кирлĕ пулсан сӳтсе улăштарма та пулать.



## Вулакансем ыйтнипе

# Чĕрĕп шăши тытать-и?

**Чĕрĕп килти шăшисене тытать теççĕ, тĕрĕсех-и?**
**Владимир ВОЛКОВ.**
Çĕрпӳ районĕ.



Чĕрĕп вăрманта, уй-хирте, сынсемпе юнашар – сад-пахчасенче – пурăнать. Чĕрчунăн кусĕсем вăйсăртарах, шăршă лайăх пĕлет, хăлхи – çивĕч. Çут çанталăкра чĕрĕп 5 çула яхăн пурăнать. 6 çултисене нумай пурăннисен йышне кĕреççĕ. Нӳрĕ, йĕпе вырăна чĕрĕп юратмасть. Çуллахи çумăра та кăмăлламасть, çумăр килнине сиссенех йăвине кĕрсе пытанать. Ăна типĕ çĕрте çавăрать: йывăç тымарĕсем хушшине, хыт-хура, çатрака айне. Çын пурăнакан вырăнсенче час-часах çăмăл сарай, капан, вут шаршанĕ айĕнче тупма пулать унăн йăвине.

Чĕрĕпĕн çулла апат нумай çимелле, çу пуçтармалла. Юпа уйăхĕн вĕçĕнче е чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнче чĕрĕп ыйха путать, ака уйăхĕнче вăранать. 127 куна яхăн çывăрать. Ыйхăран вăраннă чĕрĕп питĕ начар, вăйсăр. Хăшпĕр чухне çуркунне вăраннă чĕрĕп апат тупса вăй илеймесĕрех вилет. Хăшпĕр чĕрĕп ыйхăран вăранаймасть те.

Çуркунне кăшт вăй илнĕ чĕрĕпсем çемьеленеççĕ. Анчах та ами çăвăрлас умĕн аçи ăна пăрахса тарать. Ама 3-7 çура тăвать. Чĕрĕп çурисем суккăр, шурă тĕслĕ тата пачах та йĕпленчĕк мар çураласçĕ. Вĕсене амăшĕ сĕтпе, кăшт аталансан тытса килнĕ хурт-кăпшанкăпа тăрантарать. 1,5-2 уйăхран чĕрĕп çурисем хăйсем тĕллĕнех тăранса пурăнма вĕренеççĕ. Çемье тĕрлĕ енне саланать.

Мĕн çисе пурăнать-ха чĕрĕп? Пахчаçимĕç, тымар, ӳсен-тăран вăрри, вĕтĕ чĕрчунсем, калта-шапа, кайăк чĕппи, çăмарта, йăмпăлчăк /слизни/, ăман, хурт-кăпшанкă – тиркемест вăл. Чупакан йăрă шăшие, йĕкехӳрене тытаймасть, анчах та вĕсен çитĕнсе çитмен çурисене тытма пултарать. Мулкач çурине тĕл пулсан та йăвине сĕтĕрсе каятех.

Пахчана хурт-кăпшанкăран пĕр чĕрĕп тасатса тăраймасть паллах. Чĕрĕп çӳрекен вырăнтан çĕлен-калта тарать. Мĕншĕн тесен çĕлен çурисене пĕтерсе тăрать вăл.

Чĕрĕп – çынсене килĕшекен чĕрчун. Çавăнпа ăна хăшĕ-пĕри килте усрама тытăнать. Анчах та ас тăвăр: чĕрĕп чи таса мар тирлĕ чĕрчунсенчен пĕри. Унăн йĕпписем çинче тĕрлĕ сăвăс, микроскоппа çеç курăнакан пыйтă тем чухлех. Йĕпписене тасатса тăрайманнинчен килет çакă. Аманнă, сусăрланнă чĕрĕпе ăнсăртран тĕл пулсан пулăшу кӳни вырăнлă. Сывалсассăн ăна каялла çут çанталăка ямалла. Вĕсем ирĕкре хăйсене аванрах туяççĕ. Çут çанталăкра ĕрчесе пурăнаççĕ, тĕнчене илем кӳреççĕ.

# Алă айĕнче





Пӳлĕмри температурăра тытмалли типĕ апат-çимĕçе пăрса уçмалли хупăлчаллă банкăсенче упрама меллĕ. Кухньăри стена çумĕнче çакăнса тăракан шкап тĕпне банка хупăлчине винтпа пăрса çирĕплетмелле çеç. Хупăлча çумне типĕ çимĕç тултарнă банкăна пăрса хуратпăр. Çак меслет шкапра ытти япала валли вырăна ирĕклетет. Куç умĕнчи кирлĕ япалана суйласа илме те çăмăл.

Çатма, калак, çăпала т.ыт. те алă айĕнче пулни лайăх. Вĕсене те шкапра сентре çинче мар, çакса хурсан аванрах. Вертикальлĕ çӳлĕке шăтăклă плита çинче /вĕсене хуçалăх лавккисенче сутаççĕ/ йĕркелеме пулать. Кирлĕ чухлĕ, меллĕ çекĕлсем лартса çеç тухмалла. Ăна та стена çумне тытăнтарнă шкапсем айне çирĕплетме пулать.

# Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле | | Кун тăршшĕ | | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 02.02 | – 7 | – 10 | 02.02 | 8.39 | 06 у.к. |
| 03.02 | – 11 | – 16 | 03.02 | 8.44 | 07 у.к. |
| 04.02 | – 16 | – 20 | 04.02 | 8.48 | 08 у.к. |
| 05.02 | – 14 | – 16 | 05.02 | 8.52 | 09 у.к. |
| 06.02 | – 13 | – 15 | 06.02 | 8.56 | 10 у.к. |
| 07.02 | – 7 | – 15 | 07.02 | 9.01 | 11 у.к. |
| 08.02 | – 5 | – 6 | 08.02 | 9.05 | 12 у.к. |

Кун тăршшĕ 9 сехет те 5 минута çитет, 2 сехет те 9 минут хутшăнать. Нарăсăн 4-мĕшĕнче – уйăх тăхри.

## Сиплевçĕ

# Ӳслĕк аптратсан

Аптекăсенче «витĕмлĕ» эмелсем тем чухлех. Тепĕр чухне арпашăнсах каятăн: «Хăшне туянмалла?» Ĕлĕкрех вара асанне-кукамай эмелпе питех сипленмен. Пыр ыратсан та, температура ӳссен те халăх медицинин меслечĕсемпе усă курнă. Витĕмлĕ те, ансат та, эмелтен чылай йӳнĕрех.

Пĕр стакан хăвăра килĕшекен чей хатĕрлемелле, унта пĕр лимон сĕткенне пусса кăлармалла, пĕр апат кашăкĕ пыл хушса пăтратмалла. Ӳслĕк аптратсан, пыр ыратсан ĕçмелле. Чейе пĕр апат кашăкĕ коньяк е бальзам хушма юрать. Кун пек хатĕрленĕ чейе каçхине, çывăрас умĕн ĕçмелле.

* * *

Каçхине ӳслĕк канăçсăрлантарнипе çывăрса каймасассăн çак ансат мел пулăшма кирлĕ: 1 стакан вĕри шыва 3-5 тумлам йод тумлатмалла /нумай юрамасть/, шыва сыпкăмăн-сыпкăмăн ĕçсе ямалла. Ӳслĕк иртет.

### Сасă çĕтсессĕн

Шăнса пăсăлнипе сасă çĕтсессĕн, ӳслĕк аптратсассăн çак меслетпе сипленме сĕнетпĕр: икĕ апат кашăкĕ теркăпа хырнă çарăка е хура çарăка /редька/, пĕр стакан вĕрекен шыва термоса ярса 7-8 сехет лартмалла. Çак хутăша чĕрĕкшер стакан, кунне 3-4 хутчен, апатчен çур сехет маларах ĕçмелле.

# Тута хĕрне шатра тухсан

Хăшпĕрин тута хĕрне час-часах герпес шатри тухса ларать. Çакă организмра герпес вирусĕ вăйлă аталаннине систерет. Шатра тута хĕрне çеç мар, ытти тĕле те тухса нушалантарма пултарать. Кун пек чухне тухтăрпа канашласа ятарлă сиплев курсĕ ирттермеллех. Фармакологи препарачĕсемпе пĕрлех халăх медицини те герпесран хăтăлма пулăшать.

**Ыхра нимĕрĕ.** Пĕр-икĕ шăл ыхрана теркăпа хырса е ыхра пускăчĕпе нимĕрмелле те марльăпа чĕркесе хăмпăланакан тĕле пла-



стырьпе çыпăçтарса хумалла. Компреса 7-10 минут тытмалла.

**Пылпа панулми уксусĕ.** Вĕсене 1:1 виçепе илсе пăтратмалла /1 чей кашăкĕ пыл, 1 чей кашăкĕ панулми уксусĕ/. Çак хутăшпа хăмпăланакан тĕлсене сĕрмелле е мамăкпа /марльăпа/ хурса пластырьпе 10 минутлăх компресс çыпăçтармалла.

Сиплĕ чей ĕçни чире шалтан хăвалама пулăшать, иммунитета çирĕплетет. 1 апат кашăкĕ типĕтнĕ календула чечекне çур литр вĕрекен шыва ямалла, хупласа лартмалла. Ăна пĕр кунра 3-4 хутчен чĕрĕкшер стаканăн ĕçсе ямалла.

1 чей кашăкĕ хурăн кăчкине 1 стакан вĕрекен шыва ямалла, хупласа лартмалла. Пĕр кунра пĕчĕкшерĕн ĕçмелле.

Пĕр эрнерен герпес хăмписем пĕтеççĕ. Сиплĕ курăк чейне 10 кун ĕçме юрать.

# Техĕмлĕх курăкĕсем



**Пажитник** – пĕр çул ӳсекен пăрса йышĕнчи ӳсен-тăран. Люцерна евĕрлĕрех курăнать. Хăй тĕллĕн ӳсекен пажитник Вăтам Ази, Альп тăвĕсене çурçĕр енче, Вăтаçĕр тинĕсĕ тăрăхĕнче тĕл пулать. Ăна сиплĕхĕшĕн, техĕмлĕхĕшĕн ятарласа пахчасенче çитĕнтереççĕ. Пажитник сивве, типĕ çанталăка тӳсĕмлĕ, усă вырăна кăмăллать.

Çак курăк сахăр диабечĕпе чирлекенсемшĕн лайăх, унăн отварĕ юнри сахăр виçине пĕчĕклетет, организмри ытлашши шĕвеке хăвалать, чĕре ĕçне, апат анассине лайăхлатать, иммунитета çирĕплетет.

Йывăр чир-чĕр, операци хыççăн пажитник отварне ĕçме сĕнеççĕ. Вăл нерв тытăмне çирĕплетет, организма вăй кĕртме пулăшать.

Пажитника техĕмлĕх пек те усă кураççĕ. Куркумара, хмели-сунелире, аджикăра пур вăл. Унпа пахчаçимĕç маринадлаççĕ, аш-какай апачĕсене техĕмлетеççĕ.

Авăртнă пажитник вăррин чейĕ шăнса пăсăлсан пулăшать, компрессем туса ӳт-тир чирĕсене сиплеççĕ.



**Вĕлтрен.** Çырмаçатрара, сад-пахчара, çурт-хуралтă, карта хĕррисемпе ӳсекен çак курăка пурте пĕлетпĕр. Çуркунне вĕлтрен яшки пĕçермен çемье пулнă-ши ĕлĕкрех? Шел, халĕ çак чаплă техĕмлĕх курăкĕпе сахалрах усă куратпăр. Ӳте вĕтелекенскере хĕл валли пуçтарса типĕтме те хăратпăр пулас.

Вĕлтрен юр ирĕлсе пĕтичченех шăтса тухать те ăна çу каçипех апатра усă курма юрать. Унран салат, яшка пĕçереççĕ, кукăль-хуплу ăшлăхне хушаççĕ. Хĕл валли вĕлтрене купăста тăварланă пек тăварласа хатĕрлеме пулать, типĕтсен хĕлле яшкана яма аван. Вĕлтрен чейĕ ĕçни организма кирлĕ веществосемпе тивĕçтерме пулăшать. Унра тимĕр, кали, марганец нумай, С, В, К ушкăнри витаминсем тата ытти микроэлемент пур.

**Сухăр вĕлтрен** çӳллĕ ӳсмест – 10-60 см. Унăн çулçи вĕтĕрех. Ăна та шултра çулçăллă вĕлтрен пекех апатра усă курма юрать. Унăн тутлăхĕ ахаль вĕлтренинчен пачах та кая мар.

## Тĕпелте чухне

# Шĕшкĕ мăйăрĕпе печени

**Печени пĕçерме кирлĕ: 250 г шурă çăнăх, 175 г сахăр песукĕ, 125 г услам çу, 100 г шĕшкĕ мăйăрĕ е фундук, 100 г сĕтлĕ шăккалат, 75 г сĕлĕ хăрпăкĕ, кăштах исĕм хушма юрать, 2 апат кашăкĕ сĕт, 2 апат кашăкĕ пыл, 1 чей кашăкĕ чустана кăпăшлантараканни /разрыхлитель/.**

Çăнăха кăпăшлантаракан порошок сапса аллатпăр, сахăр песукĕ, сĕлĕ хăрпăкĕ, услам çу хушса лайăх пăтрататпăр. Варрине путăкласа юхакан пыл, сĕт, тĕпретнĕ мăйăр, вĕтетнĕ шăккалат, исĕм хушатпăр, пăтрататпăр, çăратпăр. Противень çине пергамент хутне саратпăр, çу сĕретпĕр те чустаран пĕчĕкçĕ çаврасем туса противень çине хуратпăр. Чăмаккасене пусса лапчăтатпăр та печени пулать. 200 градус хĕртсе хатĕрленĕ духовкăна 15 минутлăха лартатпăр, печени пичĕ хĕрелсен противене кăларатпăр.

# Терка икерчи

**Шуратнă çĕрулмине вĕтĕ шăтăклă теркăпа хыратпăр, унтах теркăласа сухан хушатпăр, çăмарта, тăвар, пăрăç, çăнăх хушатпăр, чустана лайăх пăтрататпăр.**



Çатмана хĕртетпĕр, тип çу яратпăр, чустана кашăкпа çатма çине илсе хуратпăр, лапчăтатпăр, ăшалатпăр. Терка икерчине хăймапа çиме аван.

# Куккурус çăнăхĕпе

**Кирлĕ пулать: 1 стакан куккурус çăнăхĕ, 150 г хăйма, çур чей кашăкĕ апат соди, 3 апат кашăкĕ сахăр песукĕ, 1 çăмарта, 1 апат кашăкĕ лимон сĕткенĕ, лимон цедри.**

Çăнăха шывпа хутăштарса çăратпăр, çăмартана сахăр песукĕпе пăтрататпăр, хăйма, сĕткен, лимон цедри хушатпăр, лайăх пăтрататпăр. Унтан чустана полиэтилен хутаçа чиксе холодильнике çур сехетлĕхе лартатпăр.

Сивĕ чустана йĕтĕрлесе саратпăр та стакан хĕррипе е ятарлă формăпа печени касса кăларатпăр. Çиелтен сахăр песукĕ сапатпăр. Печенисене хуçăласран калакпа илсе çу сĕрнĕ противень çине хуратпăр, 180 градус хĕртнĕ духовкăра 10-15 минут пĕçеретпĕр.



# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА нарăс, 6-12

## 6 тунтикун

### 1 КАНАЛ
5.00, 9.20 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 14.00, 15.00, 3.00 Новости
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Наедине со всеми» 16+
13.20, 14.15, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Давай поженимся!» 16+
18.00 Прямой информационный канал «Первая Студия» 16+
20.00 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ГРЕЧАНКА» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
23.50 «Познер» 16+
0.55 Ночные новости
1.10 «Первая Студия» 16+
2.35 Х/ф «НЕВЕРНЫЙ» 12+
3.05 «Неверный» 12+
4.30 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.40, 14.40, 17.20, 20.45 Вести. Местное время
11.55 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 16+
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
17.40 «Прямой эфир» 16+
18.50 «60 минут» 12+
21.00 Т/с «ОСИНОЕ ГНЕЗДО» 12+
23.15 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+
1.45 Т/с «БРИГАДА» 18+
2.50 Т/с «ДАР» 12+

### ЧТВ
**5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чăваш ен**
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00-9.55 Из нашего фонда. Сибирская дивизия. Телефильм (на чувашском языке)**
**11.40-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.40-14.55 Вести-Чувашия**
**17.20-17.40 Вести-Чăваш ен**
**20.45-21.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.10 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
6.05 «Таинственная Россия» 16+
7.00 «Деловое утро НТВ» 12+
8.05 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.25 Х/ф «ПАСЕЧНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
16.40 «Говорим и показываем» 16+
18.10 «Вещдок» 16+
19.40 Т/с «КУБА» 16+
21.30 Т/с «ДЕЛО ЧЕСТИ» 16+
23.35 «Итоги дня»
0.05 «Поздняков» 16+
0.15 Х/ф «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА» 16+
1.10 «Место встречи» 16+
2.45 «Живая легенда» 12+
3.30 «Судебный детектив» 16+
4.25 Т/с «ПАТРУЛЬ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Паттăрсен çулĕпе**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Молодой профи**
**7.33 Паянхи кун**
**7.37 Çула тухсан**
**7.51 Мы – вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Юхтăр юрă**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 7 ытларикун

### 1 КАНАЛ
5.00, 9.20 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 14.00, 15.00, 3.00 Новости
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15, 4.00 «Наедине со всеми» 16+
13.20, 14.15, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Давай поженимся!» 16+
18.00 Прямой информационный канал «Первая Студия» 16+
20.00 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ГРЕЧАНКА» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
23.55 Ночные новости
0.10 «Первая Студия» 16+
1.35 Х/ф «БЕЗ СЛЕДА» 12+
3.05 «Без следа» 12+

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.40, 14.40, 17.20, 20.45 Вести. Местное время
11.55 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 16+
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
17.40 «Прямой эфир» 16+
18.50 «60 минут» 12+
21.00 Т/с «ОСИНОЕ ГНЕЗДО» 12+
23.15 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+
1.45 Т/с «БРИГАДА» 18+
2.50 Т/с «ДАР» 12+

### ЧТВ
**5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чăваш ен**
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Утренний гость. Премьера (на чувашском языке)**
**9.40-9.55 Сельская жизнь (на чувашском языке)**
**11.40-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.40-14.55 Вести-Чувашия**
**17.20-17.40 Вести-Чăваш ен**
**20.45-21.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.10 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
6.05 «Таинственная Россия» 16+
7.00 «Деловое утро НТВ» 12+
8.05 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.25 Х/ф «ПАСЕЧНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
16.40 «Говорим и показываем» 16+
18.10 «Вещдок» 16+
19.40 Т/с «КУБА» 16+
21.30 Т/с «ДЕЛО ЧЕСТИ» 16+
23.35 «Итоги дня»
0.05 Х/ф «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА» 16+
1.00 «Место встречи» 16+
2.35 Квартирный вопрос 0+
3.30 «Судебный детектив» 16+
4.25 Т/с «ПАТРУЛЬ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Имею право**
**6.31 От 2 до 5**
**6.36 Пĕр сăвă**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă саламĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.27 Будьте здоровы**
**7.37 Тӳсĕм**
**7.47 Олимпийские горизонты**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Остров молодых**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 8 юнкун

### 1 КАНАЛ
5.00, 9.20 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 14.00, 15.00, 3.00 Новости
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15, 3.30 «Наедине со всеми» 16+
13.20, 14.15, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Давай поженимся!» 16+
18.00 Прямой информационный канал «Первая Студия» 16+
20.00 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ГРЕЧАНКА» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
23.55 Ночные новости
0.10 «Первая Студия» 16+
1.35 Х/ф «МАРТА, МАРСИ МЭЙ, МАРЛЕН» 16+
3.05 «Марта, Марси Мэй, Марлен» 16+
4.25 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.40, 14.40, 17.20, 20.45 Вести. Местное время
11.55 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 16+
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
17.40 «Прямой эфир» 16+
18.50 «60 минут» 12+
21.00 Т/с «ОСИНОЕ ГНЕЗДО» 12+
23.15 «Вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+
1.45 Т/с «БРИГАДА» 18+
2.50 Т/с «ДАР» 12+

### ЧТВ
**5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чăваш ен**
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00-9.55 Из нашего фонда. Чувашский государственный академический ансамбль песни и танца**
**11.40-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.40-14.55 Вести-Чувашия**
**17.20-17.40 Вести-Чăваш ен**
**20.45-21.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.10 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
6.05 «Таинственная Россия» 16+
7.00 «Деловое утро НТВ» 12+
8.05 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.25 Х/ф «ПАСЕЧНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
16.40 «Говорим и показываем» 16+
18.10 «Вещдок» 16+
19.40 Т/с «КУБА» 16+
21.30 Т/с «ДЕЛО ЧЕСТИ» 16+
23.35 «Итоги дня»
0.05 Х/ф «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА» 16+
1.00 «Место встречи» 16+
2.35 «Дачный ответ» 0+
3.30 «Судебный детектив» 16+
4.25 Т/с «ПАТРУЛЬ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.27 Хамăр ял**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Мозаика**
**7.38 Права потребителя**
**7.43-8.00 Кăмăлтан. Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 Самое время. Прямой эфир**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Юрă çаврăмĕ**
**18.29 Будни ЖКХ**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 9 кĕçнерникун

### 1 КАНАЛ
5.00, 9.20 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 14.00, 15.00, 3.00 Новости
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15, 3.30 «Наедине со всеми» 16+
13.20, 14.15, 15.15 «Время покажет» 16+
15.55 «Мужское / Женское» 16+
16.45 Чемпионат мира по биатлону. Смешанная эстафета. Прямой эфир из Австрии
18.00 Прямой информационный канал «Первая Студия» 16+
20.00 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ГРЕЧАНКА» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
23.55 Ночные новости
0.10 «Первая Студия» 16+
1.35 Х/ф «ШАЛЬНЫЕ ДЕНЬГИ: СТОКГОЛЬМСКИЙ НУАР» 18+
3.05 «Шальные деньги: Стокгольмский нуар» 18+
4.25 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.40, 14.40, 17.20, 20.45 Вести. Местное время
11.55 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 16+
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
17.40 «Прямой эфир» 16+
18.50 «60 минут» 12+
21.00 Т/с «ОСИНОЕ ГНЕЗДО» 12+
23.15 «Поединок» 12+
1.15 Т/с «БРИГАДА» 18+
3.30 Т/с «ДАР» 12+

### ЧТВ
**5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чăваш ен**
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Из нашего фонда. Лица Чувашии. Возвращение Чапая**
**9.10 Доступная среда. С сурдопереводом**
**9.25-9.55 Секреты здоровья и красоты**
**11.40-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.40-14.55 Вести-Чувашия**
**17.20-17.40 Вести-Чăваш ен**
**20.45-21.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.10 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
6.05 «Таинственная Россия» 16+
7.00 «Деловое утро НТВ» 12+
8.05 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.25 Х/ф «ПАСЕЧНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
16.40 «Говорим и показываем» 16+
18.10 «Вещдок» 16+
19.40 Т/с «КУБА» 16+
21.30 Т/с «ДЕЛО ЧЕСТИ» 16+
23.35 «Итоги дня»
0.05 Х/ф «СТРАНСТВИЯ СИНДБАДА» 16+
1.00 «Место встречи» 16+
2.35 Авиаторы 12+
3.25 «Судебный детектив» 16+
4.20 Т/с «ПАТРУЛЬ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Спорт площадки**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.53 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.22 Паянхи кун**
**7.27-8.00 Открытая студия. Прямой эфир**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Шăнкăрав**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 10 эрнекун

### 1 КАНАЛ
5.00, 9.20 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 14.00, 15.00 Новости
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Наедине со всеми» 16+
13.20, 14.15, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Жди меня»
17.00 «Человек и закон» 16+
18.00 Прямой информационный канал «Первая Студия» 16+
20.00 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 Лев Лещенко, Григорий Лепс, Леонид Агутин, Тамара Гвердцители в юбилейном концерте Сергея Жилина и оркестра «Фонограф»
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Саша Соколов. Последний русский писатель» 12+
1.10 Х/ф «МА МА» 18+
3.30 Х/ф «ДНЕВНИК СЛАБАКА: ПРАВИЛА РОДРИКА» 12+
5.15 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1
5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном» 12+
11.40, 14.40, 17.20, 20.45 Вести. Местное время
11.55 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 16+
14.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
17.40 «Прямой эфир» 16+
18.50 «60 минут» 12+
21.00 «Петросян-шоу» 16+
23.15 Х/ф «Я БУДУ РЯДОМ» 12+
1.15 Х/ф «ОБРАТНЫЙ БИЛЕТ» 16+
3.15 Т/с «ДАР» 12+

### ЧТВ
**5.07-5.10, 5.35-5.41 Вести-Чăваш ен**
**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Чебоксарские адреса**
**9.20-9.55 Телеюрă**
**11.40-11.55 Вести-ПФО**
**14.40-14.55 Вести-Чувашия**
**17.20-17.40 Вести-Чăваш ен**
**20.45-21.00 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.10 Х/ф «АДВОКАТ» 16+
6.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
6.05 «Таинственная Россия» 16+
7.00 «Деловое утро НТВ» 12+
8.05 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.25 Х/ф «ПАСЕЧНИК» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.25 Обзор. Чрезвычайное происшествие
14.00 «Место встречи»
16.40 «Говорим и показываем» 16+
18.15 «ЧП. Расследование» 16+
20.00 «Правда Гурнова»
21.00 Т/с «КУБА» 16+
0.40 «Место встречи» 16+
2.20 «Шарль Де Голль. Возвращение скучного француза» 0+
3.05 Авиаторы 12+
3.30 «Судебный детектив» 16+
4.30 Т/с «ПАТРУЛЬ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Чăваш тĕнчи**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.53 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Из сводок МВД**
**7.38 Ăстаçă**
**7.48-8.00 Поэзи çăлкуçĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Ăраскал**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 11 шăматкун

### 1 КАНАЛ
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Х/ф «ВЫЙТИ ЗАМУЖ ЗА КАПИТАНА» 16+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Спорт»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 К юбилею Татьяны Тарасовой. «Лед, которым я живу» 12+
11.20 «Смак» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 «На 10 лет моложе» 16+
14.00 Х/ф «АННА И КОРОЛЬ» 16+
16.40 Чемпионат мира по биатлону. Спринт. Мужчины. Прямой эфир из Австрии
18.00 Вечерние новости
18.15 «Кто хочет стать миллионером?»
19.10 «Минута славы» 12+
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 Х/ф «ВОССТАНИЕ ПЛАНЕТЫ ОБЕЗЬЯН» 16+
0.55 Х/ф «ОТЕЦ-МОЛОДЕЦ» 16+
2.50 Х/ф «ЦЕЛУЯ ДЖЕССИКУ СТЕЙН» 16+
4.40 «Модный приговор»

### РОССИЯ 1
5.15 Т/с «ЧАСТНЫЙ ДЕТЕКТИВ ТАТЬЯНА ИВАНОВА. ДОРОГАЯ МОЯ СЛУЖАНКА» 12+
7.10 «Живые истории»
8.00, 11.20 Вести. Местное время
8.20 Россия. Местное время 12+
9.20 «Сто к одному»
10.10 «Семейный альбом» 12+
11.00, 14.00 Вести
11.40 «Измайловский парк» Большой юмористический концерт 16+
14.20 Х/ф «КОСТЁР НА СНЕГУ» 12+
18.00 Субботний вечер
20.00 Вести в субботу
21.00 Х/ф «СКОЛЬКО СТОИТ СЧАСТЬЕ» 12+
0.50 Х/ф «ЛЮБОВЬ ПО РАСПИСАНИЮ» 12+
2.50 Т/с «МАРШ ТУРЕЦКОГО» 12+

### ЧТВ
**8.00-8.20 Вести-Чăваш ен**
**8.20-9.20 Для вас любимые. Концерт по заявкам**
**11.20-11.40 Вести-Чувашия**

### НТВ
5.15 Их нравы 0+
5.55 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
7.30 Смотр 0+
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.20 «ЧП. Расследование» 16+
8.45 «Устами младенца» 0+
9.30 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 «Еда живая и мёртвая» 12+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.05 «Поедем, поедим!» 0+
14.00 «Двойные стандарты» 16+
15.05 Своя игра 0+
16.20 «Однажды...» 16+
17.00 «Секрет на миллион» Марина Анисина 16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Ты супер!» 6+
22.30 Ты не поверишь! 16+
23.25 «Международная пилорама» с Тиграном Кеосаяном 16+
0.20 Т/с «ФОРМАТ А4» 16+
2.50 Авиаторы 12+
3.20 «Судебный детектив» 16+
4.20 Т/с «ПАТРУЛЬ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10 Точка роста**
**12.28 Килте пĕçерер-ха**
**12.34-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ**

* * *

**18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тӳрĕ эфир**

## 12 вырсарникун

### 1 КАНАЛ
5.35, 6.10 «Наедине со всеми» 16+
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.30 Х/ф «МЕТЕЛЬ» 16+
8.10 «Смешарики. ПИН-код»
8.25 «Часовой» 12+
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.20 Чемпионат мира по биатлону. Гонка преследования. Женщины. Прямой эфир из Австрии
13.00 «Теория заговора» 16+
14.00 Х/ф «ВЕРНЫЕ ДРУЗЬЯ» 16+
16.00 Концерт Стаса Михайлова
18.00 «Лучше всех!» Рецепты воспитания»
19.30 «Лучше всех!»
21.00 Воскресное «Время»
22.30 «КВН-2017» Отборочная игра 16+
0.50 Х/ф «КАНОНЕРКА» 16+
4.15 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1
5.00 Т/с «ЧАСТНЫЙ ДЕТЕКТИВ ТАТЬЯНА ИВАНОВА. ДОЛЬЧЕ ВИТА ПО-РУССКИ» 12+
7.00 Мульт-утро. «Маша и Медведь»
7.30 «Сам себе режиссёр»
8.20, 3.25 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.20 «Смеяться разрешается»
14.20 Х/ф «ОСТОРОЖНО! ВХОД РАЗРЕШЁН» 12+
16.20 Х/ф «СТАРШАЯ ЖЕНА» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьёвым» 12+
0.30 «Вымысел исключён. Век разведчика» 12+
1.30 Т/с «ЖЕНЩИНЫ НА ГРАНИ» 12+

### ЧТВ
**10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели**

### НТВ
5.05 Их нравы 0+
5.25 Х/ф «АГЕНТ ОСОБОГО НАЗНАЧЕНИЯ» 16+
7.00 «Центральное телевидение» 16+
8.00, 10.00, 16.00 Сегодня
8.20 «Счастливое утро» 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.05 «Чудо техники» 12+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.05 «НашПотребНадзор» 16+
14.10 «Тоже люди» Братья Сафроновы 16+
15.05 Своя игра 0+
16.20 Следствие вели...16+
18.00 «Новые русские сенсации» 16+
19.00 «Итоги недели» с Ирадой Зейналовой
20.30 Х/ф «ВЗРЫВНАЯ ВОЛНА» 16+
22.40 Х/ф «ВРЕМЯ СИНДБАДА» 16+
2.20 Поедем, поедим! 0+
2.45 «Еда без правил» 0+
3.35 «Судебный детектив» 16+
4.25 Т/с «КУРОРТНАЯ ПОЛИЦИЯ» 16+

### ТНТ
7.00, 7.30, 8.00, 8.30 Т/с «ТНТ. MIX» 16+
9.00 «Дом-2. Lite» 16+
10.00 «Дом-2. Свадьба на миллион» 16+
11.00 Т/с «ПЕРЕЗАГРУЗКА» 16+
12.00, 12.30, 13.00, 13.30, 14.00 Т/с «АДАПТАЦИЯ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ
**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21 Столичный курьер**
**7.34 Тăван тавралăх**
**7.45 9 месяцев**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**

* * *

**12.10-13.00 Кайри — мала. Хит-парад**

* * *

**18.10-19.00 Ылтăн çӳпçерен**

## 7 цифра çинчен

Китай календарĕпе Автан çулĕ кăçал кăрлачăн 28-мĕшĕнче пуçланчĕ. Эппин, 2017 çул пĕтĕм хăвачĕпе «çĕмĕрттерме» пуçларĕ. Кăçалхи çулăн юлашки цифри – 7.

Чăвашăн тĕнчекурăмĕнче 7 сăмах пĕлтерĕшĕ хăйнеевĕрлĕ. Вăл халăх сăмахлăхĕнче час-часах тĕл пулать. Каларăшсем, ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем 7-е килĕштерессĕ.

Акă вĕсенчен хăшĕ-пĕри.

- Çиччĕ виç те пĕрре кас.
- Çичĕ тинĕс леш енче.
- Пĕччен сухапуçпе, çиччĕн – кашăкпа.
- Çичĕ тĕслĕ асамат кĕперĕ.
- Çичĕ хут тире вистессĕ.
- Çитмĕл çичĕ сăрт-ту урлă, вăрман витĕр...
- Çичĕ тарçăн ачи суккăр пулнă тет.
- Çичĕ ют.
- Çичĕ пĕлĕт çийĕнче.
- Çиччĕн пĕр çынна кĕтмессĕ.
- Тĕнчен çичĕ тĕлĕнтермĕшĕ.
- Çиччĕмĕш туйăм систерсен.
- Çич сыпăкри тăван та тăванах.
- Алтăр çăлтăр çичĕ çăлтăр.

## Ăçта ăсталамалла?

Кирек камăн та япала нумай халĕ. Çи-пуç çеç мар, сăвăтсапа, килте усă курмалли техника хатĕрĕсем – утюг, пылесос, миксер, блендер, дрель, шуруповерт... Хăшĕ-пĕринпе сайра хутра çеç усă куратпăр пулин те килте пурпĕрех пур вăл. Ăна упрама вара вырăн кирлĕ. Кашни япалан хăйĕн вырăнĕ пулни кил-çурта тирпейлĕ тытма май парать. Кил-йышри кирек кам та япалана ăçтан илмеллине, ăçта хумаллине пĕлет. Эппин, килте шкап, çӳлĕк сахал мар пулмалла.

Анчах ăçта лартма, ăсталама пулать-ха шкапа, çӳлĕке.

Сĕтел-пукан ăстисем, пӳрт ăшчиккин дизайнерĕсем сĕнекен тĕслĕхсемпе паллашăпăр.



**Алăк çумĕнче.** Алăкран кĕрсессĕнех чылайăшĕн «гостинка» пур-ха. Анчах вăл нумай чухне кăшт ăпăр-тапăр хумалăх çеç. Урама тухмалли тумтир, икĕ-виçĕ мăшăр пушмак йышăнма пултараççĕ. Алăкран кĕрсессĕнех икĕ енĕпе те шкап маччана çитиччен хăпартма пулать. Ăна алăкран тепĕр стенана çитиех тăссассăн вăл пӳлĕмĕн стени пек çеç туйăнĕ. Кун пек чухне алăка тул еннелле уçăлмалла тумалла. Мачча çӳллĕ пулсан алăк тăррине те шкап майлаштарма пулать. П евĕрлĕ шкап пулать. Шкап тарăнăшне стандартпа тусан аван.



**Стена çумĕпе.** Стенан пĕр енне тăршшĕпех шкап тума пулать. Çакăн пек шкап пысăк пулсан та вырăнсăр курăнмасть. Вăл стенана «хулăнлататъ» çеç.

Пӳлĕм пысăк пулсан ăна шкап лартса икке пайлама лайăх. Пĕр енче, тĕслĕхрен, кравать, тепĕр енче ĕç сĕтелĕ. Кун пек шкапăн хыçĕ çирĕп материалтан пулмалла, ăна стена евĕрлĕ сăн кĕртме е уйрăммăн сăнарлама пулать. Фотообой çыпăçтарма ӳкерчĕксем çакмалли стенд евĕрлĕ лаптăк ăсталамалла.



**Кравачĕн икĕ енĕпе.** Çи-пуça, вырăн таврашне упрама кравачĕн икĕ енне шкапсем лартсан аван. Кравать пуçне, икĕ шкап хушшине, кĕнеке çӳлĕкĕ ăсталамалла. Кун пек чухне кравать шкапсем хушшине «путать». Шкапа икĕ пайлă тусан аванрах. Аялти пайĕ – тумба вырăнне. Светильник, хут-кăранташ валли. Çӳлтине стена çумне çирĕплетсе тыттармалла. Вăл япала хума меллĕ.

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru

# РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ

Адрес: 428019,
Шупашкар хули,
И.Яковлев проспекчĕ,
13-мĕш сурт,
316-мĕш пӳлĕм

Тел.: /8352/ 28-83-70,
/8352/ 56-20-07

## Саламлатпăр

*Юратнă та чи çывăх çыннăмăрсене –*
*Канаш районĕнчи Ямаш салинче пурăнакан*
*Людмила Борисовнăпа Иван Сергеевич*
*ЗАХАРОВСЕНЕ –*
*ылтăн туйпа чун-чĕререн саламлатпăр. Вĕсем ĕçчен те сăпайлă, 8 ача пăхса çитĕнтернĕ, халĕ 13 мăнукне тата 9 кĕçĕн мăнукне ура çине тăма пулăшаççĕ. Аннепе атте! Тавтапуç сире туслă та йышлă çемье çавăрнăшăн, пире пулăшнăшăн, ырă та вырăнлă канашсем панăшăн. Эпир сирĕнпе мухтанатпăр, çирĕп сывлăх, тулли телей, юрату сунатпăр.*
*Йӳçĕ, йӳçĕ, йӳçĕ тесе кăшкăратпăр.*
*Саламла ачисем, кинĕсем, кĕрĕвĕсем,*
*мăнукĕсем, тăванĕсем тата юлташĕсем.*

## ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 89625994706.
**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.
**50.Коров, тёлок.** Т. 8-927-850-85-64.
**65.КРС – дорого.** Т. 89061327604
**66.Собираю старые игрушки:** грузовики, паравозики, экскаваторы, большие педальные автомобили. Куплю в любом сост., также на з/части. Т. 89030659819.
**83.РОГА ЛОСЯ.** Т. 8-908-304-92-12.
**88.Шерсть осеннюю, очищенную** от 10 кг. Т. 8-937-374-47-01.
**89.Трактор Т-25 или Т-40,** на ходу. Т. 8-919-672-47-48.
**612.Закупаем ПОРОСЯТ** – 5-20 кг. Т. 8-967-791-89-05. Звоните!
**817.Коров, бычков, телок, лошадей.** Т. 8-961-348-91-88.
**818.Бычков, телок, коров, лошадей.** Т. 8-967-796-71-42.

## ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА колодцев, скважин.** Водоснабжение. Т. 89674715070.
**46.Бурение** колодцев, **углубление; продажа** и **д-ка** ж/б колец. bur21.ru. Т. 89053434207.
**51.Бурение** колодцев, **кольца** колодезные, замковые, качественные. Доставка. Скидки. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.
**55.ТАМАДА – юбилеи, свадьбы.** Антонина и Петр Красновы. Т. 8-902-328-05-67.
**57.Мила ТАМАДА** – видео, фотосъемка; "Уяв". **Т. 89373756378.**
**59.Услуги КАМАЗа-манипулятора, автовышки** 16 м /стрела 6 т/. Т. 8-903-379-52-58.
**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.
**152.БУРЕНИЕ скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.
**189.Бурение колодцев, скважин.** Т.: 89674703824, 89279905481.
**346.ЛЕЧЕНИЕ АЛКОГОЛИЗМА.** Анонимно. **Т.: 67-08-17, 8-962-321-88-33.** *Лиц. ЛО21-01-001557 от 10.10.2016 г. МЗ ЧР. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*
**811.Замена электропроводки** частного дома, квартиры. Материал – бесплатно. Т. 89370153540.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
НА 3, 6, 7 ЭТАЖАХ
Дома печати. Справки по телефонам:
28-83-64, 28-83-70, 56-04-17.

## СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**1.Большой ассортимент** качественной фабричной **МЕБЕЛИ** по доступным ценам: стенки, прихожие, шкафы, комоды, столы, кровати. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; «Северная» ярмарка». Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.
**Сайт:** www.ex-comfort.ru.
**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Песок, ОПГС, щебень, кирпич, **КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5 м. Бурение. Высокое качество. Доставка манипулятором. Без выходных. Т. 8-967-470-46-77.
**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**
**7.Гравмассу,** песок, **щебень,** керамзит. Скидки. Т. 89276689713.
**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит**. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.
**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Скидка. Т. 89033583021.
**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.
**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.
**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, **металлосайдинг. Согнём** любые доборные элементы для кровли и фасада. Т. 44-44-33.
**13.Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича, **керамзит.** Доставка. Т. 8-903-322-57-66.
**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**
**15.КИРПИЧ – любой.** Т. 8-961-339-33-63.
**16.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** торф, уголь – недорого. Т. 89053465671.
**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.
**22.БЛОКИ керамзитобетонные** заводские, пропаренные; **КИРПИЧ цветной** – любой. Доставка манипулятором. Тел.: 8-903-322-02-08, 8/8352/ 48-02-08.
**24.ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 89278533596.
**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, колодезные **КОЛЬЦА.** Т. 89033468556.
**27.КВАРТИРЫ ОТ ЗАСТРОЙЩИКА** в кирпичном доме в НЮР г.Чебоксары по низким ценам /без посредников/. Ипотека - Россельхозбанк, Сбербанк, ВТБ 24. Тел.: 89276670119, 8/8352/ 38-31-54.
**31.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.
**40.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, срубы, дрова, горбыль. Т. 89033891400.
**53.Бензинпа ĕçлекен** "ELITECH" **генератор.** Т. 89033581361.
**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.
**58.КИРПИЧИ** от 9 руб., **керамблоки** от 31 руб., фундаментные блоки, **кольца колодезные,** керамзит в мешках, плиты перекрытия, цемент и сухие смеси. Услуги манипулятора. Т. 8-903-379-52-58.
**61.СРУБЫ, строительство** домов, бань "под ключ". Т. 89276670355.
**62.Блоки КБ** от 30 руб., **цемент,** доски обрезные от 5500 руб., **песок,** ОПГС, **кирпич.** Доставка. Услуги манипулятора. Т.: 8-903-345-53-24, 89033222532.
**64.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, половняк, **КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.
**76.Срубы** с комплектацией. Липовые срубы, **каркасные дома** на заказ. Д-ка. Т. 89379528467.
**79.КОЗОЧКУ зааненской породы** /5 мес./. Т. 8-903-358-89-54.
**98.Бетон,** раствор, фунд. **блоки, плиты** перекрытия, перемычки, крышки для погреба, доски. Д-ка. Дёшево. Т. 89278535732.
**158.Прицеп мотоблока и трактора.** Т. 8-905-344-47-35.
**610. Отруби** – 7 р., **пшеницу** – 10 р., **ячмень** – 9 р. Т. 89373916016.
**796.СРУБЫ** /хвоя/. Т. 89876756874.
**821.БЫЧКОВ** возрастом от 10 дней и 3-х месяцев, породы "Холмогоры" и "Голштино фризы". **Доставка – бесплатно.** Т. 8-903-320-27-47.

ХЫПАР
ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ
4 627126 799883

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан
Д.А.МОИСЕЕВ
Редактор Э.Н.ИВАНОВА

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Кил-çурт, хушма хуçалăх".
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:
56-15-30, 56-00-67.
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70,
56-20-07 – инспекторсем.

Факс: /8352/ 28-83-70.
Электронлă почта:
hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.

01.02.2017. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 64-24-01 – издательство директорĕ.

Тираж 11523. Заказ 315.